И. Мукина, филологи ăслăхĕсен кандидачĕ,
ЧПУ доценчĕ

# Чĕлхемĕрĕн кун-çулне тĕпчекенĕ

Чăваш чĕлхин аваллăхне тĕпчесе ырă ĕçсем тунă пысăк тĕпчевçĕсен ячĕсем тĕнче тюркологийĕнче ылтăн сас паллисемпе çырăнса юлнă. Тюркологи ăслайĕн аталану çулĕ çинче В. Шотт, Н.И. Золотницкий, В.В. Радлов, Н.И. Ашмарин, Г.И. Рамстедт, М. Рясянен, И. Бенцинг, З. Гомбоц, У. Вихманн, В.Г. Егоров, Л. Лигети тата тĕрлĕ халăхран тухнă нумай-нумай тĕпчевçĕ ĕмĕрлĕх вăта юпа пулса тăраççĕ. Пурте вĕсем чăваш чĕлхине тĕпчесе тĕнче чапне тивĕç пулнă.

Çак ретре пирĕн тĕнче шайĕнче ят-шыв илнĕ чĕлхеçĕмĕр, Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ пулнă, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Патшалăх премийĕн лауреачĕ **Михаил Романович Федотов** чăннипех те тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрать.

М.Р. Федотов 1919 çулхи кăрлач уйăхĕн 20-мĕш кунĕнче Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси ялĕнче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Шкулта лайăх вĕреннĕ, уйрăмах чăваш, вырăс, нимĕç чĕлхисене, математикăна кăмăлланă. Учитель ĕçне килĕштернĕ. Тулли мар вăтам шкултан вĕренсе тухсан Патăръелĕнчи педагогика училищине вĕренме кĕрет, тепĕр виçĕ çултан учитель пулса тăрать. Вĕрентекен ятне илсен Михаил Романович пĕр хушă Анат Чаткасри тулли мар вăтам шкулта нимĕç чĕлхи вĕрентсе пурăннă, каярахпа Шăмăршăри вăтам шкула куçнă, хăйне килĕшекен ĕçе малалла тăснă. Шăмăршăра ĕçленĕ хушăра вăл ирçе чĕлхипе паллашнă.

1939 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă. Вăрçă тухнă кунах вут-çулăм ăшне кĕнĕ... Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн Михаил Романович 4 çул ытла Мари Республикинчи Кокшанмари ялĕнчи вăтам шкулта нимĕç чĕлхи вĕрентсе пурăннă, хăй те мари чĕлхине вĕренме тытăннă, мари чĕлхипе чăваш чĕлхи хушшинчи пĕрпеклĕхсене тĕпчеме пикеннĕ. Çапла пулас ăсчах хăйĕн ăс-хакăл çӳпçине чĕлхе хыççăн чĕлхе хывса пынă.

Мал ĕмĕтлĕ учитель шкулта ăнăçлă та тухăçлă ĕçлес тесен педучилищĕре илнĕ пĕлӳ сахаллине лайăх туйнă. Аслă пĕлӳ илес шухăшпа М.Р. Федотов Чулхула (Горький) хулинчи ют çĕр-шыв чĕлхисен педагогика институтне вĕренме кĕрет, унтан 1954 çулта аслă пĕлӳллĕ специалист пулса тухать. Пĕр çул хушши Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашри вăтам шкулта ĕçлет. Ют чĕлхесене ăста пĕлекен опытлă педагога республикăра часах асăрхаççĕ те 1954 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне чĕнсе илеççĕ. Тепĕр икĕ çултан Михаил Романовича Учительсен пĕлĕвне ӳстерекен чăваш институчĕн ют чĕлхесен кабинетне ертсе пыма лартаççĕ. Кунта вăл 1964 çулччен ĕçленĕ. Çак хушăра республикăри шкулсенче ют чĕлхе вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелес тесе тăрăшать: нумай-нумай шкулта пулать, учительсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ятарлă курссем ирттерет, шкулта ĕçлекенсене çĕнĕ вĕрентӳ мелĕсемпе меслечĕсене хăнăхтарма тăрăшать. Çак ĕçе витĕмлĕрех тума ĕмĕтленсе вĕрентекенсен вĕрентекенĕ пулса тăнă Михаил Романович çуллен кĕнеке кăларса тăрать. 1957 çулта унăн «Чăваш шкулĕсенче нимĕç чĕлхинчи глаголсене вĕрентесси», 1958 çулта «Чăваш шкулĕнче нимĕç чĕлхин синтаксисне вĕрентесси», 1959 çулта «Чăваш шкулĕнче нимĕç чĕлхинчи хăш-пĕр пуплев пайĕсене вĕрентесси» ятлă кĕнекисем пичетленсе тухнă. Ку кĕнекесенче М.Р. Федотов чăваш шкулĕсенче нимĕç чĕлхине вĕрентнĕ чухне тăван чĕлхе законĕсемпе факчĕсем çине таянмаллине уçăмлă кăтартнă. Чĕлхе методикин çак паха енĕ Михаил Романовича ирĕксĕрех чăваш чĕлхине тишкерес çул çине тăратать, вăл тăван чĕлхемĕрĕн тытăмĕпе законĕсене çине тăрса тĕпчеме пуçăнать. Пурăна киле тăван чĕлхемĕр ăна пуçĕпех хăй ытамне çавăрса илнĕ.

1963 çулта унăн «Чăваш чĕлхинчи модаллĕхе палăртмалли мелсем» ятлă кĕнеки пичетленсе тухать. Çак кĕнекене кандидат диссертацийĕ вырăнне ăнăçлă хӳтĕленĕ хыççăн М.Р. Федотов 1964 çулта филологи наукисен кандидачĕ пулса тăрать.

Çĕнĕрен çуралнă наука кандидатне çийĕнчех И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне ĕçе илеççĕ. 1967 çулта, Шупашкарта Чăваш

патшалăх университечĕ уçăлсан, М.Р. Федотов университетри ют çĕршыв чĕлхисен кафедрин доценчĕ пулса тăрать. Тепĕр икĕ çултан, университетри чăваш чĕлхипе литература кафедрине куçнă хыççăн, чĕлхеçĕ пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать. Ют чĕлхесем икĕ еннелле сирĕлсе тăраççĕ те тăван чĕлхене çул параççĕ. М.Р. Федотов вара пĕтĕм вăй-хала парса чăваш чĕлхин иртнĕ ĕмĕрсенчи кун-çулне тĕпчеме тытăнать.

Ку вăхăта Михаил Романович пурнăç хура-шурне те курса ирттернĕ, тĕнче ăс-хакăлне те пухса ăса хывнă пултаруллă тĕпчевçĕ пулса тăнă. Утмăлмĕш çулсен варринче вăл «Чăваш чĕлхипе Атăлçи тата Пермь угро-финĕсен чĕлхисем хушшинчи авалхи çыхăнусем» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ çырса пĕтернĕ. Ăна икĕ пысăк кĕнеке туса, пĕрне – 1965 çулта, тепĕрне 1968 çулта пичетлесе кăларнă. Çак пысăк ĕç М.Р. Федотов пурнăçĕнче кăна мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн пурнăçĕнче паллă событи пулса тăнă.

М.Р. Федотов чăваш чĕлхипе угро-финн чĕлхисем хушшинчи авалхи çыхăнусене тишкерсе çырнă тĕпчев ĕçне тĕнчери паллă тюркологсемпе финноугороведсем тӳрех асăрханă та тивĕçлипе пысăк хак панă. Михаил Романович 1969 çулта çак темăпа филологи наукисен докторĕн диссертацине хатĕрлесе пĕтернĕ. Ăна 1969 çулта Эстонири Таллинн университетĕнче ăнăçлă хӳтĕленĕ те филологи наукисен докторĕ пулса тăнă.

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçленĕ вăхăтра М.Р. Федотов чăваш студенчĕсене тюркологи курсĕн пуçламăшне, чăваш чĕлхин историне, авалхи тĕрĕк чĕлхине, тĕрĕк чĕлхисен танлаштару грамматикине вĕрентнĕ. Университетра калама çук йывăр çăк туртса пынă хушăрах вăл кĕнеке хыççăн кĕнеке çырса хатĕрленĕ, çуллен тенĕ пекех вĕренӳ хатĕрĕсем пичетленĕ. 1971 çулта унăн университет типографийĕнче «Чăваш чĕлхин историйĕ» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă. Çак тĕпчев ĕçĕнче вăл чăваш чĕлхипе тĕрĕк чĕлхисем хушшинчи сасă тӳр килĕвĕсен законĕсене тишкерсе тухнă. Паян кунччене çак кĕнеке чăваш чĕлхин ытти чĕлхесем хушшинчи вырăнне палăртакан чи паха ĕç пулса тăрать.

Университетра туса пынă пархатарлă ĕçĕсемшĕн Михаил Романовича 1967 çулта профессор ятне панă, чылай кĕнекесем кăларнă. Академик çырнă ĕçсен тĕп теми – чăваш чĕлхин историйĕ. Паянхи кунран аваллăхалла сулăнса пырсан Михаил Романовичăн ăслăлăхри интересĕсене çапларах палăртма пулать:

1. Хальхи чăваш чĕлхин пиçĕлĕхĕ, паркалăхĕ, патварлăхĕ, тасалăхĕ.

2. Чăваш чĕлхине тĕпченĕ ăславçăсен кун-çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, пултарулăхĕ.

3. Чăваш чĕлхипе тутар чĕлхи хушшинчи истори çыхăнăвĕсем.

4. Чăваш чĕлхипе мари чĕлхи хушшинчи хутшăнусем.

5. Чăваш чĕлхипе угро-финн чĕлхисем хушшинчи авалхи çыхăнусем.

6. Чăваш чĕлхипе Атăлçи пăлхарсен чĕлхи хушшинчи хурăнташлăх.

7. Чăваш чĕлхипе венгр чĕлхи хушшинчи авалхи хутшăнусем.

8. Чăваш чĕлхипе тĕрĕк чĕлхисен кăк-несĕлтен пыракан тăванлăхĕ.

9. Тĕрĕк чĕлхисен историйĕ.

10. Алтай пĕрлĕхĕ çинчен калакан теори. Чăваш, тĕрĕк, монгол, тунгус-маньчжур, корея, яппун чĕлхисен сĕм авалхи пĕрлĕхĕ.

11. Урал тата Алтай чĕлхисен пĕрлĕхĕ.

12. Чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхи хушшинчи хутшăнусен историйĕ.

13. Чăваш чĕлхине араб, перс тата ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсем.

14. Чăваш сăмахĕсен историйĕпе этимологийĕ.

М.Р. Федотов чăваш чĕлхин авалхи шăпине, унăн аталану йĕрне нумай тĕпченĕ. Асăннă темăсемпе «Советская тюркология», «Советское финно-угроведение» журналсенче чылай статья пичетленнĕ. Çавăн пекех чĕлхеçĕн çак темăпа çырнă кĕнекисен шучĕ те пысăк. Уйрăмах чĕлхемĕр историне сĕм авалтан пуçласа çутатса паракан «Чăваш чĕлхин алтай чĕлхисен йышĕнчи вырăнĕ» ятпа пичетленсе тухнă виçĕ томлă кĕнеки пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç шутланать.

Чăваш чĕлхипе кӳршĕллĕ угро-финн чĕлхисем хушшинчи авалхи хутшăну-çыхăнусене чĕлхеçсем те, историксем те пĕлеççĕ, унăн хăш-пĕр ыйтăвĕсене совет ученăйсем те, ют çĕр-шыв тĕпчевçисем те çырса кăтартнă.

Анчах ăслăлăхра çак проблемăна ятарласа тĕпчени, мĕнпур ыйтăва хускатни пулманччĕ-ха. Çавна шута илсе, М.Р. Федотов кӳршĕллĕ чĕлхесем хушшинчи çыхăнăва нумай енлĕн, тарăн тĕпчесе вĕренет, унăн результачĕсене икĕ кĕнекере – «Чăваш чĕлхи Атăл-Пермь тăрăхĕнчи угро-финн чĕлхисемпе истори тапхăрĕнче çыхăну тытни» (1965, 1968 çç.) – тата нумай статьяра çырса панă. Асăннă кĕнекесенче VIII-XIV ĕмĕрсенче Атăлпа Пермь тăрăхĕнче пурăннă авалхи пăлхарсемпе мари, удмурт тата ытти угро-финн халăхĕсен хутшăнăвĕсене, çав хутшăнусене пула чĕлхесем пĕр-пĕрне витĕм кӳнине, пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене тĕрлĕ сăмахсемпе формăсем кĕнине уçăмлă та ĕненмелле кăтартнă.

1990-мĕш çулсен вĕçнелле пирĕн сумлă ăсчахăмăр тăван чĕлхемĕр историне малалла тĕпчесе пĕр харăсах икĕ капмар тĕпчев ĕçĕ пичетлесе кăларчĕ. Вĕсенчен пĕри – «Чăваш чĕлхи. Пуçламăшĕ. Алтай тата финн-угор чĕлхисен хушшинчи вырăнĕ. Грамматика историйĕ» ятлă монографи – чăваш чĕлхин историне сĕм авалтан тытăнса паянхи кунсене çитиччен çутатса кăтартать.

Тепĕр сулмаклă ĕç – икĕ томлă «Чăваш чĕлхин этимологи словарĕ». Эпир, чăвашсем, çав тери телейлĕ халăх. Пирĕн пĕрремĕш этимологи словарĕ (сăмах кунта Н.И. Золотницкий хатĕрленĕ «Тымар сăмахсен чăвашла-вырăсла словарĕ» пирки пырать) 1875 çултах тĕнчене тухнă. Каярахпа çак ĕçе В.Г. Егоров профессор сыпăнтарса пынă. Унтан М.Р. Федотов пухса хатĕрленĕ çĕнĕ этимологи словарĕ – чăваш тата тĕрĕк чĕлхисене истори тĕлĕшĕнчен танлаштарса тĕпчемелли кĕнеке – чĕлхе пĕлĕвне аталантарас ĕçре тунă калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ событи пулса тăчĕ.

М.Р. Федотовăн 1999 çулта çапăнса тухнă «Тĕне кĕмен чăвашсен çын ячĕсен словарĕ» кĕнекине те авалхи чăваш ячĕсен этимологи словарĕ теме пулать.

Ырă йывăç çуллен çимĕç парать, теççĕ. М.Р. Федотов академикăмăр пирĕн хура тăпра çине лартса ӳстернĕ йывăç пекех пулчĕ, çуллен халăхăмăра ырă çимĕçпе савăнтарса пурăнчĕ.

2008 г.

*Мукина, И. Чĕлхемĕрĕн кун-çулне тĕпчекенĕ / И. Мукина // Çулталăк кĕнеки = Календарь года : 2009. – Чебоксары, 2008. – С. 28-31.*